26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1943
МАЙ
7
ЭРНЕКУН
95(6332) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Америкăри „Нью-Йорк Таймс" тата Англири „Таймс" хаçатсен корреспонденчĕн ыйтăвĕсем çине И. В. Сталин юлташ панă ответсем

Америкăри „Нью-Йорк Таймс" тата Англири „Таймс" хаçатсен Мускаври корреспонденчĕ г. Паркер СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председателĕ И. В. Сталин юлташ патне çыру янă, çав çырура вăл Америкăри тата Англири общественноçа интереслентерекен икĕ ыйту çине ответ пама ыйтнă.

И. В. Сталин юлташ Паркер господина çакăн пек çырупа ответленĕ:

„Г-н Паркер!

Майăн 3-мĕшĕнче Польшăпа Совет Союзĕ хушшинчи çыхăнусем пирки Сирĕн икĕ ыйтăва илтĕм.

Сире хамăн ответсене ярса паратăп:

1. Ыйту: „Гитлерла Германи поражени тӳснĕ хыççăн СССР Правительстви вăйлă та никама пăхăнман Польшăна курма шутлать-и"?

ОТВЕТ. Паллах, шутлать.

2. „Сирĕн шутпа, Польшăпа СССР хушшинчи çыхăнусем вăрçă хыççăн мĕнле никĕссем çинче никĕсленсе тăмалла"?

ОТВЕТ. Ырă кӳршĕллĕ çирĕп çыхăнусем çинче тата пĕр-пĕрне хисеплени çинче, е, Польша халăхĕ çавăн пек тума килĕшет пулсан,—Совет Союзĕпе Польшăн тĕп тăшманĕсем пулса тăракан нимĕçсене хирĕç пĕр-пĕрне пулăшасси çинчен союз туни çинче никĕсленсе тăмалла.

Сире хисеплесе И. СТАЛИН

1943 çулти майăн 4-мĕшĕ".

Ака ĕçĕсен хăвăртлахне ӳстерсе пымалла

Колхозсен уйхирĕсенче хĕрӳ ĕç пырать. Социализмлă ялхуçалăхĕн ĕççыннийĕсем тăван çĕршывпа Хĕрлĕ Çар умĕнчи хăйсен аслă тивĕçне пурнăçласа, 1943 çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илессишĕн кĕрешеççĕ. Уйхирсенче çураки ĕçĕсем анлăн сăрăлса пынă вăхăтра пирĕн халăх Верховный Главнокомандующин боевой приказне итлерĕ. Пиншер колхозниксем, колхозницăсем, трактористсемпе трактористкăсем халĕ Сталин юлташăн приказĕ çине конкретлă ĕçпе ответлеççĕ.

Шăхасан районĕнчи «Звезда» колхоз членĕ И. Макаров юлташ Сталин юлташăн приказне итленĕ хыççăн уя тухса нормăпа пăхнинчен икĕ хут ытларах тырă акрĕ. «Новая жизнь» колхоз членĕ, 74 çулти колхозник А. Алексеев çулпусăн приказĕ çине ответлесе, ĕç нормине 267 процент тултарса ĕçлет. Трактористка-комсомолка Д. Егорова юлташ (Красноармейски МТС-ĕ) «У-2» маркăллă тракторпа икшер смена хушши канмасăр ĕçлет, хăйĕн тракторĕпе вăл талăкра 12-шер гектар сухаласа пырать.

Калинино районĕнчи «Чăваш Коммуни» колхоз оборона фондне валли çураки планĕнчен ирттерсе 12 гектар тырă акрĕ, Сталин юлташăн приказне итленĕ хыççăн пулнă митингра колхозниксем оборона фондне хывма татах 12 гектар тырă акма йышăнчĕç. Мăн Явăшри Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Сталин юлташăн приказне итленĕ хыççăн çураки ĕçĕсен хăвăртлăхне ик-виç хут ӳстерчĕç. Çуракине вĕçленĕ бригадăсем ытти бригадăсене пулăшма тытăнчĕç.

Республикăри нумай колхозсенче кăçал çураки ĕçĕсем иртнĕ çулхинчен организованнăрах тата хăвăртрах пулса пыраççĕ. Майăн 5-мĕшĕ тĕлне республика 144.140 гектар акса çураки планне 42,3 процент пурнăçларĕ.

Сталин юлташăн приказĕпе хавхаланса, колхозниксем çуракинче ырми-канми ĕçлеççĕ. Пĕтĕм сеялкăсене ĕçе кăларчĕç, май умĕнхи ăмăртура тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе, çĕнĕ çитĕнӳсем тума çĕкленчĕç, ĕçре социализмлă ăмăрту тата анлăрах сарăлчĕ.

Калинино районĕнчи колхозсем çураки ĕçĕсене хăвăрт туса пыраççĕ. Район çураки планне 70 процент тултарчĕ. Елчĕк районĕнчи колхозниксем, ĕçе пысăк пахалăхпа туса пынипе пĕрлех, кашни йышши тырра хăй вăхăтĕнче, хăвăрт акса хăварассишĕн хĕрӳллĕн кĕрешеççĕ. Район майăн 1-мĕшĕпе 5-мĕшĕ хушшинче 3.093 гектар акрĕ. Малта пыракан 16 колхоз кунта тĕштырăсене тата пăрçа йышши культурăсене акса пĕтерчĕç.

Анчах çурхи тырăсем акас ĕç пур çĕрте те тикĕс пулса пымасть-ха. Çитменлĕхсем нумай. Хăшпĕр колхозсенче çураки агротехникине тăташах пăсаççĕ. Туртăм вăйĕпе ĕçре туллин усă курни çук. Тырра алăпа акас сиенлĕ шухăш-кăмăла халĕ те пĕтермен, сеялкăсем чылайĕшĕ ĕçре мар.

Çĕрпӳ районĕнчи чылай колхозсенче сеялкăсем пур пулин те тырра алăпа акаççĕ. «1905-мĕш çул» колхоз тырра алăпа 106 гектар акнă. Ку çеç те мар, колхозра çурхи сухана 7—8 сантиметр тарăнăш çеç тунă. Çакăн пек тĕслĕхсемех «Нива», «Кульмет» тата ытти чылай колхозсенче те пур. Анчах районри çĕрĕç пайĕ, райсовет исполкомĕ тата ВКП(б) райкомĕ çакăн пек пысăк çитменлĕхсене вăхăтра тӳрлетмен.

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи руководительсем те çураки ĕçĕсемпе тĕплĕн интересленмен пирки ĕçри çитменлĕхсене вăхăтра тӳрлетсе пымаççĕ. Район центрĕнчен çухрăм çурăри Калинин ячĕпе тăракан колхозра пысăк çитменлĕхсем пур. Колхоз председателĕ Архипов юлташ çураки ĕçĕсене сӳрĕккĕн ертсе пынине пула кунта ĕç вăраха юлса пырать. Колхозăн 88 лаша. Машинăсемпе ĕç хатĕрĕсем те çителĕклĕ. Акмалли çĕр лаптăкĕ 320 гектара яхăн. Колхоз акана тухни 12 кун иртнĕ-ĕнтĕ, анчах мĕнпурĕ те 213 гектар çеç (вăл шутран тракторсемпе 126 гектар) сухаланă, 113 гектар акнă. Çакăн пек хăвăртлăхпа аксан, ака ĕçĕ кунта чăтма çук вăраха каять. Майăн 3-мĕшĕнче колхоз хăйĕн лашисемпе пурĕ те 6,48 гектар çеç сухаланă, 10,3 гектар акнă, майăн 4-мĕшĕнче çакăн чухлĕ те сухаласа акайман.

Çĕрпӳ МТС-ĕн виçĕ бригадинчи 18 трактортан 7-шĕ çеç суха тăваççĕ. Ыттисем çĕмĕрĕлсе кайнă. Шăхасан МТС-ĕн политотделĕ трактор бригадисен ĕçĕпе сахал интересленет. Енĕшри М. Горький ячĕпе тăракан колхозăн хирĕнче ĕçлекен 9-мĕш номерлĕ бригадăра тăватă трактор. Бригада 6 кун хушшинче 71 гектар çеç сухаланă, 50 гектар акнă. Анчах горючие нормăпа пăхнинчен 150 литр ытларах расходласа пĕтернĕ. Трактор бригадин бригадирĕ Чернов тăтăшах ĕçкĕре çӳрет, тракторсем час-часах ĕçлемесĕр тăраççĕ.

Колхоз руководителĕсен, çĕрĕç органĕсен, колхозсенчи коммунистсемпе комсомолецсен ĕçне халĕ çуракине епле ирттернине кура хакламалла. Колхозниксемпе колхозницăсен анлă масси ырми-канми ĕçлеме хатĕр. Çавăнпа та çуракине пысăк пахалăхпа тата вăхăтра туса ирттересси руководительсем ĕçе большевикла ертсе пыма пĕлнинчен килет.

Партипе совет организацисем çураки ĕçĕсене тĕплĕнрех ертсе пымалла. Ĕçĕн пахалăхне çĕклемелле, ĕç дисциплинине пăсакансене хирĕç çийĕнчех мерăсем йышăнмалла. Ака хăвăртлăхне куллен ӳстерсе пымалла. Колхозсен мĕнпур сеялкисене ĕçе кăлармалла, тракторсемпе туллин усă курса тырра хăвăрт акса пĕтермелле.

ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ РАЙОНСЕНЕ ПУЛĂШМА

КОМСОМОЛЬСКОЕ. Нимĕç вăрă-хурахĕсенчен ирĕке кăларнă халăхсене пулăшма Шмидт ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем 9 центнер тырă тата ытти япаласем те пачĕç

Н. Виноградов.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 5-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Кубань çинче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, хаяр çапăçусем хыççăн пирĕн войскăсем тăшман оборонине 25 километр сарлакĕш шăтарса кĕрсе, Крымская чугунçул узелне йышăнса илнĕ. Ăна нимĕçсем хирĕç тăмалли вăйлă тĕреклетнĕ узел туса хунă пулнă. 13 километр шалалла кĕрсе, пирĕн войскăсем çавăн пекех Красный, Черноморский, Запорожский, Веселый, Садовой, Благодарный, Мелеховский, Нижне-Греческий, Верхний Адагум тата Неберджаевская ятлă халăх пурăнакан пунктсене йышăнса илнĕ.

80 оруди, 220 пулемет тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

Çапăçу хирĕнче тăшманăн 7.000 салтакĕпе офицерĕ ытла выртса юлнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Майăн 4-мĕшĕнче фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче пирĕн авиаци чаçĕсем нимĕçсен 5 танкĕнчен кая мар тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 30 автомашинине çити пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ. Боеприпассен 3 складне сирпĕнтернĕ, артиллерипе минометсен 7 батарейине пусарнă, нимĕç транспортне путарнă тата тăшман пехотине пĕр батальона çити сапаласа янă е пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кубань çинче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, пĕр соединенин чаçĕсем хаяррăн çапăçнă. Пехота тăвакан атакăсене пулăшса, совет артиллерисчĕсем пĕр участокра нимĕçсен 2 танкне, пехота ларса пыракан тата грузсем тиенĕ 27 автомашинине пĕтерсе тăкнă, тăшманăн темиçе вуншар дзочĕпе блиндажне аркатнă. Пирĕн летчиксем тăшман войскисем çине бомбăсем пăрахнă, вĕсене штурмланă. Старши лейтенант Шмелев юлташ пĕр кун хушшинче сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 4 истребительне персе ӳкернĕ, пилот Комельков юлташ тата старши сержант Лиховидов юлташ кашниех икшер самолет персе ӳкернĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн чаçсем малтанхи позицисенчех тăрса разведка туса пынă. Пĕр участокра 130 çынлă нимĕç отрячĕ пирĕн оборона системине çапăçса разведка тума хăтланнă. Совет боецĕсем тăшман çине харăссăн пеме пуçланă. Пирĕн позицисем умĕнче хăйсен 60 виллине яхăн хăварса, гитлеровецсем васкасах каялла чакнă. Тепĕр участокра пĕр чаçăн разведчикĕсем тăшман тылне кĕрсе кайнă та икĕ дзота сирпĕнтернĕ, тăшманăн 37 салтакне вĕлерсе тăкнă, унтан темиçе çынна тыткăна илсе, хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Балаклейăран кăнтăртарахра артиллерипе минометсенчен персе тăрса нимĕçсен 2 дзочĕпе 4 блиндажне çĕмĕрнĕ, шултăра кĕпçеллĕ 3 пулемета аркатнă тата гитлеровецсен пĕр ротине çити пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн летчиксем тăшман тылĕнчи чугунçул станцийĕсене тапăннă. Взрывсемпе пушарсем нумай тухнине паллă тунă. Сывлăшри çапăçура нимĕçсен 2 бомбардировщикне персе ӳкернĕ.

* * *

Дон çинчи Ростовран хĕвеланăçнерехре лейтенант Кузменеев юлташ командир пулса ертсе пыракан разведчиксен пысăк мар группи, тăшман тылне вăрттăн кĕрсе кайса, нимĕç пехотин ротине атакăланă. Пирĕн боецсем 40 гитлеровеца вĕлернĕ; тăшман çинчен мĕн кирлине пĕлсе, çухатусем тумасăрах хăйсен чаçне таврăннă.

* * *

Ленинград фронтĕнче тăшмана хирĕç артиллерирен тата пăшалсемпе пулеметсенчен персе тăнă. Пирĕн подразделенисем 200 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă, темиçе дзота тата 13 блиндажпа землянкăна аркатса тăкнă. Ленинград сывăхĕнче пулнă сывлăшри çапăçусенче совет летчикĕсем нимĕçсен 2 истребительне персе ӳкернĕ. Кунсăр пуçне тăшманăн 4 самолетне пирĕн зенитнăй артиллери пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сумы облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ халăх пурăнакан пысăк пунктри нимĕç гарнизонне сасартăк атакăланă. Урамсенчи хаяр çапăçусенче тăшман пысăк çухатусем тӳснĕ. Ăнăçлă маневрсем туса, совет патриочĕсем тăшман гарнизонĕн пĕр пайне хупăрласа илнĕ. 87 çынтан тăракан гитлеровецсен группине, хĕçпăшалĕсене пăрахма килĕшменскерсене, пĕтерсе тăкнă. Тăшманăн 120 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Винтовкăсемпе боеприпассем нумай тытса илнĕ.

* * *

Аялрахра нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем тыткăна лекнĕ красноармеецсене тискеррĕн асаплантарни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр. «1943 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче Ленинград фрончĕн пĕр участокĕнче совет подразделенийĕ йышăнса илнĕ нимĕç землянки патĕнче эпир Калинин облаçĕнче çуралнă Григорий Иванович Лученков ятлă красноармеецăн виллине тупрăмăр, ăна гитлеровецсем тискеррĕн асаплантарса вĕлернĕ. Ăна пилĕк таран çĕре чавса хунă, йĕри-тавра чулпа купаланă. Унăн пуçне татнă, сылтăм хулпуççине каснă, кăкăрне штыкпа чиксе пĕтернĕ. Лученков юлташа нимĕçсем тыткăна илсе çав тери тискеррĕн асаплантарса вĕлернине халĕ паллă тунă». Акт çине çаксем алă пуснă: майор Дугаев, старшина Свирид, старши сержант Чередниченко, красноармеецсем Иванов, Петров тата ыттисем те.

* * *

Французсен ирĕклĕ стрелокĕсем юлашки кунсенче ăнăçлă операцисем чылай туса ирттернĕ. Францин тĕрлĕ районĕсенче войскăсем, хĕçпăшал тата çар материалĕсем турттарса пыракан нимĕçсен 10 поездне ӳпентерсе янă. Канра çĕрле портри чугунçул çинчи пур стрелкăсене те сирпĕнтернĕ. Сент-Илерте патриотсен группи нефть заводне кĕрсе кайса бензохранилищĕсен кранĕсене уçнă та 16.000 литр бензин юхтарса кăларнă. Лионра ирĕклĕ стрелоксем нимĕç отрядне тапăннă. Пуçланса кайнă çапăçура 25 нимĕçе вĕлернĕ е амантнă.

Майăн 6-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Майăн 6-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Кубань çинче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, пирĕн войскăсем тăшманпа çапăçнă. Фронтăн ытти участокĕсенче паллă улшăнусемех пулман.

* * *

Кубань çинче, Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, хаяр çапăçусем пынă. Пĕр соединенин боецĕсем оборонăллă нумай сооруженисене пĕтерсе, тăшманăн темиçе опорнăй пунктне йышăнса илнĕ.

Çав çапăçусенче нимĕç войскисем çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳснĕ. Пĕр участокра кăна нимĕçсен 400 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Пирĕннисем тыткăна илнĕ тата трофейăсем тытса илнĕ.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем нимĕçсен 200 салтакĕпе офицерне çити тата 5 пулеметне пĕтерсе тăкнă, тăшман артиллерийĕн 6 батарейине пусарнă.

Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 2 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнче пĕр чаçăн разведка тăвакан вăйлатнă группи тăшман патне вăркăнса кĕнĕ те темиçе окоппа траншейăна йышăнса илнĕ. Хăйсен позицийĕсене каялла илес шутпа тăшман умлăхыçлă 4 контратака тунă. Пирĕн боецсем гитлеровецсен контратакисене пурне те сирсе пăрахнă, 200 нимĕç салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Севск районĕнче старши лейтенант Горбачев командир пулса ертсе пыракан разведка группи çĕрле тăшман хушшине кĕрсе кайнă. Штык вĕççĕн пынă çапăçура пирĕн боецсем темиçе вуншар гитлеровеца вĕлернĕ, 2 блиндажа аркатнă тата темиçе çынна тыткăна илнĕ. Наблюдатель Ковалев юлташ совет окопĕсем патнелле тухнă нимĕç снайперне асăрханă. Ковалев юлташ гитлеровец патне вăрттăн шуса пынă та ăна тыткăна илнĕ.

Пирĕн авиаци сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 4 самолетне персе антарнă.

* * *

Калинин фронтĕнче пирĕн артиллерирен персе тăнипе нимĕçсен 8 дзочĕпе блиндажне аркатнă, артиллери батарейине, минометсен 3 батарейине пусарнă, тăшман пехотине пĕр ротăна çити сапаласа янă е пĕтерсе тăкнă.

* * *

Белорусси партизанĕсен «Фашизма вилĕм» ятлă отрячĕ темиçе кун хушшинче танксемпе авиаци пулăшнипе кĕрешекен нимĕçсен карательнăй пысăк экспедицине хирĕç хаяррăн çапăçнă. Совет патриочĕсем тăшманăн темиçе танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата 270 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Партизансен тепĕр отрядĕнчи подрывниксен группи нимĕçсен 4 çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă. 3 паровоз, боеприпассем тиенĕ 15 вагон, салтаксемпе офицерсене турттарса пыракан 4 вагон тата хĕçпăшал тиенĕ 9 вагон арканнă.

* * *

Нимĕçсен 13-мĕш танковăй дивизийĕнчи 66-мĕш мотострелковăй полкĕн 7-мĕш ротинчен Кубань çинче тыткăна лекнĕ ефрейтор Иозеф Малек çапла каласа панă: «Мана темиçе кун хушши çапăçма кăна тиврĕ. Фронта эпĕ апрель уйăхĕнче маршевăй батальонпа çитрĕм. Салтаксем пирĕн çине мăнкăмăллăн пăхса çапла калатчĕç: «Кадровăй войскăсем Российăна çĕнтерме пултараймарĕç пулсан, халĕ фронта пинĕ-пинĕпе хăваласа пыракан чылай çула çитнĕ парикмахерсем, сутăçăсем, официантсем, кельнерсем мĕнех тума пултарĕç-ши?» тетчĕç.»

* * *

Польша патриочĕсем пĕр предприятире домнăна çĕмĕрнĕ тата заводăн темиçе çуртне çунтарса янă. Серпца районĕнче Польша партизанĕсем нимĕçсен çар эшелонне ӳпĕнтерсе янă, Бродницы районĕнче кăмрăк тиенĕ поезда ӳпĕнтернĕ. Варшавăра патриотсем 2 нимĕç чиновникне урамрах вĕлернĕ. Вĕсенчен пĕри нимĕçсен ĕç бюровĕнче паллă вырăн йышăнса тăнă. Поляксене Германие каторгăна хăваласа каяс тĕлĕшпе вăл çав тери пысăк тискерлĕх кăтартнă.

ÇУЛПУÇĂН ИСТОРИЛЛĔ ПРИКАЗĔ—ĔÇПЕ КĔРЕШӲ ПРОГРАММИ

Çулпуç приказĕ çĕнĕ çитĕнӳсем тума чĕнет

КАНАШ, майăн 5-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Вагонсем юсакан заводри Демьянков юлташ ертсе пыракан комсомолецсемпе çамрăксен фронтовой бригади ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартать. Бригадăри комсомолецсем Волкова, Мокшина, Дамбровская юлташсем кулленхи ĕç нормине 200—250-шар процент тултараççĕ. Бригада апрель уйăхĕн планне 118 процент пурнăçларĕ. Çавăн пекех Антропов, Ефимов юлташсен бригадисем те пысăк хастарлăхпа ĕçлеççĕ. Антропов юлташăн бригади апрель уйăхĕнче планран ирттерсе 3 вагон кăларнă.

Фронтовой бригадăсем май уйăхĕнче тата лайăхрах ĕçлеме пулчĕç. Аслă çулпуçăн Сталин юлташăн приказне вуланă хыççăнах бригадăри комсомолецсем хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Халĕ вĕсем вăл обязательствăсене пурнăçлассишĕн кĕрешеççĕ.

Сталин ячĕпе тăракан промысла артелĕнче ĕçлекенсем Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне итленĕ хыççăн хăйсем çине тата та пысăкрах обязательствăсем илчĕç.

Стахановецсем С. Слепов, Т. Шашкин, Г. Долгов, В. Фадеев юлташсем производство планне 250 процентран кая мар тултарса пыма пулчĕç.

Ĕçлекенсем хушшинче социализмлă ăмăрту çĕнĕ вăй-хăватпа сарăлса кайрĕ. — Сталин юлташăн приказĕ пире çĕнĕ çитĕнӳсем тума чĕнет, çак чĕнĕве эпир хамăр ĕçре пурнăçласа пырăпăр, — теççĕ вĕсем.

Артель апрель уйăхĕнче производство планне 228 процент тултарнă. Май уйăхĕнче артель производствăллă плана 300 процентран кая мар тултарассишĕн кĕрешет.

Ф. Малышкин.

Трактористсен ответĕ

КУКĔÇ, майăн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри пур колхозсенче те Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнче панă приказа вулаççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем çулпуçăн кашни сăмахне ырласа йышăнаççĕ. Вăл вĕсене çĕнĕрен пысăк çитĕнӳсем туса ĕçлеме чĕнет, Хĕрлĕ Çара активлăнрах пулăшса тăма хушать.

Майăн 3-мĕшĕнче МТС-ра митинг пулса иртрĕ. Трактористсемпе трактористкăсем Верховный Главнокомандующин Сталин юлташăн приказĕ çине ответлесе, çуракинче кашни кун ĕç нормине ирттерсе тултарма сăмах пачĕç. Тепĕр куннех вĕсем хăйсен сăмахне ĕçпе çирĕплетрĕç. Тракторист Сергеев майăн 4-мĕшĕнче 7 гектар вырăнне 8 гектар, трактористка Кудрявцева 4 гектар вырăнне 5 гектар сухаларĕç.

В. Караушев,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ

Бунин юлташ директор заместителĕ пулса ĕçлекен заводра Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи историллĕ приказне сӳтсе-явас майпа кашни цехрах нумай çынлă митингсем пулса иртрĕç. Митингра чылай рабочисем хĕрӳллĕ сăмахсем тухса каларĕç.

— Эпĕ кашни уйăхрах производство планне 120—130 процент тултарса пытăм. Продукци пахалăхĕшĕн те тăрăшрăм. Аслă полководецăн приказĕ пире ĕçре хавхалантарать. Пирĕн халĕ нихăçанхинчен те патвартарах ĕçлемелле. Эпĕ кулленхи ĕç нормине 150 процентран кая мар пурнăçлама пулатăп. Ытти комсомолецсене те ман пек ĕçлеме ăмăртăва чĕнетĕп, — тет пĕр цехри стахановка-комсомолка Вайсбанд юлташ.

Слесарнăй цехăн бригадирĕ Каннапольский юлташ хăйĕн бригадинчи рабочисен ячĕпе май уйăхĕнчи производство планне 150—160 процент тултарма пулчĕ.

Мастерсем Нерубенко, Хворов юлташсем кулленхи ĕç нормине 170 процент тултарса, производство программине срокчен пурнăçлама пулчĕç.

Илнĕ обязательствăсене кашни рабочи тимлĕн пурнăçласси çине шанса тăни çинчен цех начальникĕ Троицкий юлташ тухса каларĕ.

З. Кац.

Пирĕн авиаци Гомель, Минск Орша, Брянск чугунçул узелĕсем çине тапăннă

Майăн 2-мĕшĕ, 3-мĕшĕ тата 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле инçене вĕçекен пирĕн авиаци Гомель, Минск, Орша, Брянск чугунçул узелĕсем çине тата çав хуласенчи боеприпассен склачĕсем çине массăллăн тапăннă. Тапăннă вăхăтра çав чугунçул узелĕсенче войскăсем, боеприпассем, танксем, автомашинăсем тиенĕ нимĕç эшелонĕсем туллиех пулнă тата горючи составĕсем пулнă. Бомбăсем пăрахнă хыççăн пысăк пушарсем тухнине тата боеприпассемпе горючи тиенĕ чугунçул составĕсем тата складсем сирпĕнсе кайнине паллă тунă.

Пирĕн авиаци Брест, Гомель, Брянск чугунçул узелĕсене тата Ялтăпа Констанца порчĕсене тапăннă

Майăн 5-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле инçене вĕçекен пирĕн авиаци Брест, Гомель, Брянск чугунçул узелĕсемпе çав хуласенчи çар склачĕсене массăллăн вĕçсе пырса тапăннă. Бомбăсем пăрахнине пула пушарсем нумай тухнине тата чугунçул составĕсем çинчи боеприпассем вăйлăн сирпĕннине паллă тунă.

Пирĕн тинĕс авиацийĕ Ялта тата Констанца порчĕсене тапăннă, унта тăракан тăшман карапĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕнче

1943 çулта Чăваш АССР-ĕн районĕсем тăрăх выльăх-чĕрлĕхрен продукци илмелли план çинчен

ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче выльăх-чĕрлĕхсен йышне тата вĕсен тухăçлăхне ÿстермелли мерăсем çинчен» 1943 çулхи апрелĕн 13-мĕшĕнче йышăннă постановлени тăрăх, Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ выльăх-чĕрлĕхрен продукци илмелли çакăн пек план тунă:

РАЙОНСЕМ	Кашни фуражлă ĕнерен сĕт суса илмелле (литрпа)	Çулталăк пуçламĕшĕнче пулнă кашни сурăхран çăм илмелле (килогр.)	Кашни чăхран çăмарта илмелле (штукăпа)	Кашни хурт-хăмăр çемьинчен пыл илмелле (килогр.)	Çулталăк пуçламĕшĕнче пулнă кашни 100 сурăхран путеке илмелле	Кашни сысна аминчен сысна çурисем çитĕнтермелле	Кашни кролик аминчен кролик çурисем çитĕнтермелле	Кашни хурт-хăмăр çемьинчен ăвăс илмелле (килогрампа)	Кашни ангорски ăратлă кролик аминпе çăвăрĕсенчен мамăк илмелле (килогрампа)
Улатар	1350	2,5	70	36	110	11	12	0,8	400
Элĕк	1050	2,5	70	30	112	11	„	0,6	„
Вăрнар	1050	2,3	75	35	110	11	„	0,8	„
Йĕпреç	1050	2,4	70	37	110	11	„	0,8	„
Ишлей	1100	2,3	70	28	110	11	„	0,6	„
Калинински	950	2,3	70	32	110	11	„	0,8	„
Канаш	1050	2,3	70	32	110	11	„	0,8	„
Куславкка	950	2,2	65	28	100	11	„	0,6	„
Комсомольски	1100	2,3	70	33	112	11	„	0,7	„
Красноармейски	900	2,0	65	30	105	11	„	0,7	„
Хĕрлĕ Чутай	1000	2,2	70	34	110	11	„	0,7	„
Кувакино	1050	2,3	60	35	100	10	„	0,8	„
Сĕнтĕрвăрри	1000	2,3	70	32	110	11	„	0,7	„
Октябрьски	1000	2,4	70	32	110	11	„	0,7	„
Первомайски	950	2,2	65	37	105	11	„	0,8	„
Пăрачкав	1450	2,5	65	37	112	11	„	0,8	„
Советски	900	2,5	75	30	110	11	„	0,6	„
Сĕнтĕр	1050	2,2	75	30	110	12	„	0,6	„
Вăрмар	1150	2,3	75	30	112	11	„	0,6	„
Çĕрпӳ	1250	2,3	75	28	115	12	„	0,6	„
Шупашкар	1150	2,1	75	28	112	12	„	0,6	„
Чкаловски	1100	2,4	70	30	110	11	„	0,7	„
Шăмăршă	1000	2,2	65	34	100	10	„	0,7	„
Шăхасан	1050	2,2	70	30	110	11	„	0,7	„
Çĕмĕрле	1100	2,2	70	37	110	11	„	0,8	„
Етĕрне	1250	2,5	75	30	112	11	„	0,6	„
Елчĕк	1100	2,2	70	28	112	11	„	0,7	„
Тăвай	1100	2,5	70	30	110	11	„	0,7	„
Шупашкар хули	1300	2,7	75	28	112	11	„	0,6	„

Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ райсовет исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсене выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç кашни колхозра мĕнле пынине кÿллĕн контрольлесе тăма, выльăх-чĕрлĕхрен продукци илмелли плана пурнăçа кĕртмелле тума хушнă.

Пичет кунне Шупашкарта уявлани

Большевикла пичет кунĕ ячĕпе майăн 5-мĕшĕнче, Шупашкарта, Советсен Çурчĕн ларусем пулакан залĕнче хулари партипе совет тата рабочисемпе çар корреспонденчĕсен активĕн пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пухăва ВКП(б) Шупашкар хула комитечĕн секретарĕ Д. Федоров юлташ уçрĕ.

Еçлĕ президиум суйланă хыççăн, пуху, пысăк хавхаланупа, тăвăллăн алă çупса, хисеплĕ президиума халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин юлташ пуçпулса тăракан ЦК ВКП(б) политбюро составне суйларĕ.

Большевикла пичетĕн отечественнăй вăрçă кунĕсенчи задачисем çинчен «Красная Чувашия» хаçатăн редакторĕ Вишняков юлташ доклад туса пачĕ.

Доклад хыççăн «Чăваш Коммуни» хаçатăн редакторĕ Яковлев, табак фабрикинчи стена хаçачĕн редакторĕ Березина, пĕр заводри многотиражка редакторĕн заместителĕ Кац юлташсем тухса каларĕç.

Юлашкинчен пуху, республикăри хаçатсемпе хулари стена хаçачĕсен ĕçĕнчи çитĕнÿсемпе çитменлĕхсене тата малашнехи задачăсене палăртса, резолюци йышăнса хăварчĕ.

Ларусен залĕн фойинче хулари стена хаçачĕсемпе Чăвашгиз 1942—43 çулсенче кăларнă кĕнекесен выставкине тунă. Пухăва пынисем выставкăна кăмăлласа пăхрĕç.

ПОЧТАЛЬОНСЕМ ТĂРĂШСА ĔÇЛЕÇÇĔ

КАНАШ. (Телефонпа). Сиккассинчи почта уйрăмне (начальникĕ Л. Берх) 5 ял кĕрет. Отделенири пур почтальонсем те хаçат-журнал сармалли плана тултарнă. Доронин ячĕпе тăракан колхозри почтальон Игнатьева хăй ĕçне тăрăшса туса пырать. Вăл хаçатсемпе çырусене яланах вăхăтра ситерсе парать. Пособи тата ытти укçасене те яланах вăхăтра, почта уйрăмĕнчен хăй илсе килсе парать. Çавăнпа та ăна колхозниксем юратаççĕ. Çавăн пекех Çĕнĕ Шелттемри «Красная Звезда» колхозри почтальон Кривлин та хăйĕн ĕçне ăнăслăн туса пырать.

И. Максимов.

ПРОФСОЮЗПА КОМСОМОЛĂН ÇУЛЛАХИ КРОСĔ

ВЦСПС Секретариачĕпе ВЛКСМ Центральный Комитечĕ майăн 23-мĕшĕпе июнĕн 14-мĕшĕ хушшинче профсоюзпа комсомолăн çуллахи кросне ирттерме йышăннă.

Кăçал çуллахи кроса ĕçхалăхне çарпа физкультура ĕçне хутшăнтармалли массăллă мероприяти туса ирттерме палăртнă. Вăл физкультурăн чи лайăх организацийĕсене палăртмалла. Кросс программинче — БГТО тата ГТО комплексĕсен пĕрремĕшпе иккĕмĕш ступенĕн нормисем тăрăх чупасси, гранатăсем аякка ывăтасси, пластунла шăвасси т. ыт. те.

Кроса ертсе пыма оргкомитет тунă. Облаçсенче, крайсенче тата республикăсенче вырăнти оргкомитетсем пулмалла. (ТАСС).

Колхозниксемпе колхозницăсем! Уйхирсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе, Хĕрлĕ Çара апат-çимĕç çителĕклĕ парса тăрăр!

Тĕштырăсене лайăх акса хăвартăмăр

ЕЛЧĔК. Паха тырпул туса илес фронтра çĕршыва активлăн пулăшас тесе, пирĕн ялсоветри колхозниксем колхозницăсем çуракине кăçал хастарлăн ĕçлерĕç. Пысăк тухăçлă тырпул çуракине вăхăтра туса ирттернинчен килет. Çакна эпир тĕплĕн шута илтĕмĕр. Тырăсене тăпра пулса çитнĕренех акма пуçларăмăр.

Çапла апрелĕн 29-мĕшĕ тĕлне пирĕн «Новый путь», «Красное знамя» колхозсем тĕштырăсене пĕтĕмпех акса пĕтерчĕç, пахча çимĕç культурăсене те акрĕç. «Новый путь» колхоз кăçал 110 гектар тулă, 101 гектар сĕлĕ акрĕ. «Красное знамя» колхоз 75 гектар тулă, 60 гектар сĕлĕ акрĕ. Ку колхозсем пĕр-пĕринпе нумайранпа ĕнтĕ ăмăртса ĕçленĕ. Кăçал колхозсем хушшинче социализмлă ăмăрту татах та вăйланчĕ. Çураки вăхăтĕнче колхозниксем хушшинче ăмăрту мĕнле пынине тĕрĕслесех тăчĕç.

«Новый путь» колхоз члайĕ хĕрачасем акара ырми-канми ĕçлерĕç. А. Угарова, С. Щербакова хăйсен ĕç нормине тăтăшах 140 процент тултарса пычĕç. Çураки пулнă кунсенче вĕсем сехетне тулăн усă курса ĕçлеме колхоза столовăй çук нумай пулăшрĕ. Кашни кунах ирхине 5 сехет тĕлне уя ирхи апат туха тăчĕ, ватă колхозниксем те, çамрăккисем те саванса ĕçлерĕç, тĕштырăсене хăвăрт акса пĕтерчĕç.

П. Щербаков,
Елчĕк районĕнчи Уразмет ялсовет исполкомĕн председателĕ.

„Калиновка" колхоз çураки ĕçĕсене вĕçлерĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, майăн 4-мĕшĕ. (Хамăр корр.). Пĕр çын пек организованно ĕçлесе, «Калиновка» колхоз членĕсем сакăр талăк хушшинче çурхи тырăсене тата техникăллă культурăсене пурне те лайăх акса хăварчĕç. Тырăсене пуринчен ытла сеялкăсемпе акрĕç. Кашни колхозник талăкри ĕç нормине тăтăшах 150—200 процент тултарса пычĕ; лашасене кăшт каннă вăхăтра та çитерсех пынипе, вĕсем вăйлăн ĕçлеме пултарчĕç.

Колхозница А. Винокурова юлташ кашни кунах икшер гектар сухаласа пычĕ, 8 кун хушшинче пурĕ 12 гектар ытла сухаларĕ. Ирирех ĕçе тухса, вăл тĕттĕм пуличченех ĕçленĕ.

Серафима Матвеева юлташ колхозра 3—4 çул ĕнтĕ яланах сеялкăпа тырă акать. Кăçал вăл тата лайăхрах ĕçлерĕ. Талăкра хăй ĕçлекен сеялкăпа 3 гектар акмалла пулсан, вăл кулленех 5-шер гектар акса пычĕ.

Сÿреçесем те çураки ĕçĕсене тимлĕн туса пычĕç. А. Матвеева, А. Федоров юлташсем сÿреленĕ çĕрте ĕç нормине тăтăшах икшер хут ирттерсе тултарнă. Вĕсем 8 талăк хушшинче 18—20 ĕçкунĕ ĕçлесе тунă.

Çураки ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăнах колхозниксем çĕрулми лартмалли вырăна сухалама тытăнчĕç.

С. Шадин.

Машинăпа акассине хакламаççĕ

КАНАШ. Районри малта пыракан колхозсем çурхи тырăсене акса пĕтерчĕç. «Красная Армия», Доронин тата Чкалов ячĕсемпе хисепленекен колхозсем çурхи тырăсене акса пĕтерсе, пахча-çимĕç участокĕсене сухалама тытăнчĕç.

Анчах та районра çураки ĕçĕсем халĕ те кирлĕ пек сарăлман-ха. Кăçал районри колхозсен пурĕ 13.285 гектар çине çурхи тырăсем акса хăвармалла пулсан, майăн 4-мĕшĕ тĕлне 4.115 гектар кăна акнă.

Çураки ĕçĕсем уйрăмăнах «Красный путиловец», «Комбайн» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче юлса пыраççĕ. Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Иванов юлташ) паянхи куна 7 гектар çеç акнă.

Чылай колхозсенче тырра машинăпа акассине хакламаççĕ. Колхозсенче пурĕ 115 сеялка. Вĕсене пурне те юсанă. Анчах халĕ тырă акнă çĕрте пурĕ те 44 сеялка çеç ĕçлет. Ытти сеялкăсене ĕçе яман, нумай колхозсенче тырра алăпа çеç акаççĕ.

Чапаев ячĕпе тăракан колхозра, акă, виçĕ сеялка ахалех ларaççĕ. Тырра пĕтĕмпех алăпа акнă. «3-мĕш Пятилетка» колхозра икĕ сеялка, вĕсемпе пачах акман. Çураки ĕçĕсен хăвăртлăхне ÿстермелле, тырра хăвăртрах тата лайăхрах акма сеялкăсемпе туллин усă курмалла.

Ф. Малышкин.

Хастарлăн ĕçлеççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, майăн 4-мĕшĕ. (Телефонпа). Майăн 2-мĕшĕ тĕлне районра 5.512 гектар сухаласа, тĕштырăсене тата пăрça йышши культурăсене пурĕ 4.404 гектар акнă. МТС тракторĕсемпе 896 гектар сухаланă.

Колхозниксемпе колхозницăсем çураки ĕçĕсене фронт ыйтнă пек хастарлăн туса пыраççĕ. Машинăсемпе туллин усă курса тата кашни колхозник ĕçре пысăк тимлĕхлĕ пулнипе, «Красный Октябрь», «Искра», «Красное Сормово» тата ытти хăшпĕр колхозсем çурхи тырăсем акмалли плана пурнăçларĕç, халĕ çĕрулми лартма çĕр хатĕрлеме тытăнчĕç.

Район кăçал çуркунне çеç 205 гектар кок-сагыз акрĕ. Çĕршыв оборонишĕн питех те кирлĕ çак паха культурăна колхозниксем государство кăтартса панă чухлĕ акса хăварассишĕн çине тăрса ĕçлерĕç.

Анчах та начар ĕçлекен колхозсем те пур-ха. Тĕслĕхрен, «Восход», «Новая жизнь» колхозсем ку таранa çитсе те 26—80 гектар çеç сухаланă. Ку колхозсем хăй вăхăтĕнче лашасене начар пăхнă, çураки туса ирттерме лашасем валли кирлĕ чухлĕ апат хатĕрлемен. Çак колхозсене халь ытти колхозсенчен выльăх апачĕ илсе пачĕç, ытларах тракторсемпе сухаламалла турĕç.

Я. Абросимов.

Хĕрлĕ Çара тинĕс-Çар флочĕн боецĕсемпе командирĕсене тата Тинĕс флочĕн моряксене Англин орденĕсемпе медалĕсене парса наградăлани

Совет Союзĕпе Германи фронтĕнче Великобританипе ССР-ăн пĕрлехĕ тăшманне — гитлерла Германие хирĕç пыракан кĕрешÿре командовани заданийĕсене пурнăçлана чухне хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Великобритани королĕ VI Георг 1942 çулта вĕçене Хĕрлĕ Çара Тинĕс-Çар Флочĕн боецĕсемпе командирĕсене орденсемпе медальсем парса наградăланă.

Совет Союзне çар грузĕсем турттарса пынă вăхăтра харăсене тăшман атакăланисене сирсе пăрахас тĕлĕшпе хăйсен пурнăçне шеллемесĕр тата пĕлсе кĕрешнĕшĕн Великобритани королĕ VI Георг 1942 çулăн ... лĕ пĕççĕне ССР тинĕс флочĕн моряксене те орденсем парса наградăланă.

Майăн 4-мĕшĕнче Великобританин ССР-ти послĕ А. К. Керр господин, наградăланă çынсем Мускава пулман пирки, Британин орденĕсемпе медалĕсене наградăланă çынсене Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарне В. М. Молотов юлташа парса панă.

Великобританин послĕ А. К. Керр господин тата Ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов юлташ пĕрне-пĕри кĕске сăмахсем каланă. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

ХИМИЛЛĔ ВĂРÇĂ ÇИНЧЕН ЫЙТНИНЕ ЧЕРЧИЛЛЬ ОТВЕТЛЕНИ

ЛОНДОН, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англин премьер-министрне Черчилле общинăсен палатинче паян çапла ыйту панă: химиллĕ вăрçă пуçласа ярсассăн, нимĕçсем чăн-чăнах отравляющи веществосемпе усă курнипе курманнине пĕлме правительство тивĕçлĕ мерăсем йышăнма шутлать-и, вырăссене хирĕç отравляющи веществосемпе усă курнине палăртма нейтральнăй комиссирен ыйтма шутлать-и? тенĕ.

Черчилль çапла ответленĕ: «Тăшман отравляющи веществосемпе усă курнипе курманнине пĕлмесĕр правительство хирĕçле мерăсем йышăнас çук. Ку тĕлĕшпе нейтральнăй çĕршыв комиссийĕсемпе усă курма шутламастпăр эпир», тенĕ.

Иртнĕ вăрçăра ку тĕлĕшпе йăнăшсем пулнă пирки халĕ сыхланулăрах пулмалла, тесе каласан, Черчилль—ăна эпĕ пĕлетĕп, тесе ответленĕ. Анчах та, тенĕ вăл, «хамăрăн вырăс союзниксенчен эпир тĕрĕс информаци илессине эпĕ шанса тăратăп», тенĕ.

БЕНЕШ АМЕРИКĂНА КАЯТЬ

ВАШИНГТОН, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, майăн 12-мĕшĕнче Вашингтона Чехословакин президенчĕ пырса çитессе кĕтеççĕ. Бенеш Рузвельтпа курнăçмалла.

ТУНИСРИ ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕ çапла пĕлтерет: Англин пĕрремĕш армийĕн фронтĕнче Франци войскисем тăшман вăйлăн хирĕç тăнине пăхмасăрах малалла ăнăçлăн куçса пынă. Çурçĕрте, Меджез-Эль-Бабран хĕвелтухăçнерехре, тăшмана йывăр çухатусем кÿрсе, унăн вăйлă контратакине сирсе пăрахнă. Фронтăн çурçĕр участокĕнче американецсен иккĕмĕш корпусĕ, Америка войскисен сулахай флангĕнчи Франци войскисемпе пĕрле кĕрешсе пырса, малалла куçнă. Тăшман тунă контратакăна сирсе пăрахнă.

Саккăрмĕш армин фронтĕнче патрульсем хастарлăн кĕрешнĕ.

Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем Пон-дю-Фаспа Энфидавилль хушшинчи паллă çула татнă. Майăн 4-мĕшĕнче кăнтăрла тĕлĕнче союзниксен войскисем Бизертăран 16 километрта тăнă.

ЖИРОПА ДЕ ГОЛЛЬ ТĔЛПУЛАС УМĔН

ЛОНДОН, майăн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Çурçĕр Африкăри войскисен штабĕ çапла пĕлтерет: Жиро генерал де Голль генералпа майăн 5-мĕшĕ иртсен çывăх вăхăтрах тĕл пуласси çинчен пĕлтернĕ.

АМЕРИКА БОМБАРДИРОВЩИКĔСЕМ АНТВЕРПЕНА ТАПАННĂ.

ЛОНДОН, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 4-мĕшĕнче кăнтăрла Америка бомбардировщикĕсем Антверпенри (Бельгия) промышленность объекчĕсене атакăланă. Бомбăсем пăрахни ăнăслă пулни палăрнă.

АМЕРИКА САМОЛЕЧĔСЕМ РЕДЖО-ДИ-КАЛАБРИЯ ТАТА ТАРАНТО ÇИНЕ ТАПАННĂ

ЛОНДОН, майăн 5-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, майăн 4-мĕшĕнче американецсен «Либерейтор» йышши самолечĕсем Реджо-ди-Калабрия тата Таранто (Италия) çине пырса бомбăсем пăрахнă.

Совет çамрăкĕсен Пĕтĕм Союзри митингĕ

Майăн 2-мĕшĕнче Мускавра, Союзсен Çурчĕн Колоннăй Залĕнче, совет çамрăкĕсен представителĕсен Пĕтĕм Союзри митингĕ пулса иртнĕ.

Митингра çаксем сăмах тухса каланă: Украина представителĕ — партизан Евгений юлташ, нимĕç оккупанчĕсем оккупациленĕ Курск хулинче 15 уйăх хушши пурăннă врач Коровина, Борис Горбатов писатель, Совет Союзĕн Геройĕ— Сталинграда хăюллăн хÿтĕленĕ Василий Зайцев, ВЛКСМ Киров обкомĕн секретарĕ Алексей Винокуров, Красноуральскри заводра ĕçлекен платчица Александра Степанова, Екатерина Иванова трактористка т. ыт. те. Митинг трибуни çинчен вĕсем пурте Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи историллĕ приказне пурнăçлама совет çамрăкĕсен пĕтĕм вăйне мобилизацилеме хатĕр пулни çинчен каласа панă.

Митингра пулнисем Верховный Главнокомандующи, Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ патне çыру янă.
(ТАСС).

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Çĕнĕ çĕре куçарас ĕçе большевикла ертсе пымалла

Партипе правительство йышăннă тăрăх, пирĕн республикăра пысăк ĕç — колхозниксемпе единоличниксене Иркутск тата Камчатка облаçĕсене, Бурят-Монгол АССР-не куçарас ĕç пырать. Пирĕн аслă çĕршывăн хĕвелтухăç районĕсем çав тери пуян. Ялхуçалăхĕпе промышленность валли тата фронта мĕн кирлине пурне те парса тăма кунта ылттăн, кĕмĕл тата ытти хаклă йышши металсем, руда, çĕркăмрăкĕ, нефть, пискер-кайăк, пулă т. ыт. те нумай.

Пирĕн республикăри колхозниксем Байкалпа Камчатка районĕсене куçса кайма ыйтса заявленисем параççĕ. Хĕвелтухăç районĕнчи колхозсем куçса каякансем пырассине кĕтеççĕ, вĕсем валли çуртсем хатĕрлеççĕ.

1942 çулта хĕвелтухăç районĕсене нумай колхозниксем куçса кайрĕç. Çĕнĕ вырăнта вĕсене питĕ лайăх кĕтсе илнĕ, колхоз ĕçне хутшăнма тивĕçлĕ условисем туса панă. Акă мĕн çыраççĕ Иркутск облаçĕнчи, Ольхон районĕнчи Усть-Анга колхозне куçса кайнă колхозниксем:

«Ольхон районне эпир 1942 çулта çитрĕмĕр. Халĕ Усть-Анга колхозĕнче пурăнатпăр. Тĕрĕссипе каласан, пире çакăн пек лайăх кĕтсе илессине эпир шанман. Пристане пирĕн валли лавсем ячĕç. Пире хирĕç улусра пурăнакансем пурте тухрĕç. Кашни çемьенех уйрăм хваттерсем пачĕç. Пирвайхи кунсенчех пире колхозниксем пур енчен те тăванла пулăшни курăнчĕ.

Çакăншăн эпир Усть-Анга колхозникĕсене пысăк тав тăватпăр. Пирĕншĕн тăрăшнăшăн ĕçпе ответлеме тăрăшăпăр. Ырми-канми ĕçлеме пулатпăр.

Вăрçă вăхăтĕнчи йывăр условисем çине пăхмасăрах, çул çинче те, кунта та партипе правительство пирĕншĕн çав тери тăрăшнăшăн эпир, куçса килнисене пурне те вăя шеллемесĕр, вăхăта шутламасăр ĕçлеме чĕнетпĕр. Колхозсенче лайăх ĕçлесе, тăшмана çĕнтерме пулăшăпăр».

Патша саманинче Çĕпĕрпе Инçет Хĕвелтухăçĕ каторгăпа ссылка вырăнĕ пулнă. Совет влаçĕ пулнă хыççăн, большевиксен партийĕ ертсе пынипе тата совет халăхĕ тăрăшнипе, вăл вырăнсем пирĕн ... çĕршыври чечекленекен районсем пулса тăчĕç. Унти пуянлăха пĕтĕмпех алла илсе усă курас тĕлĕшпе ĕç вăйĕ нумай кирлĕ. Çакăн çинчен куçса кайнă колхозник Баранов хăйĕн çырăвĕнче çапла çырать:

«Эпир кунта килнĕ чухне Çĕпĕр çинчен сахал пĕлнĕ. Кунта çулталăкра нумай вăхăт хушши шартлама сивĕсем тăраççĕ пулĕ, хĕвел курăнмасть те пулĕ, халăхĕ тискер пулĕ, тесе шутлаттăмăр.

Кунта çитсессĕн пĕтĕмпех урăхлине куртăмăр. Хĕл пирĕн патăртинчен сивĕрех пулин те, çилсем çук, çавăнпа пĕрмаях ĕçлеме пулать. Хĕвеллĕ кунсем кунта пирĕн патăртинчен сахал мар, нумайрах та пулĕ. Халăхĕ те питĕ аван.

Пире питĕ лайăх кĕтсе илчĕç. Правлени пирĕн ятпа лайăх апат хатĕрленĕ, пирвайхи кунах кунти нумай çынсемпе паллашрăмăр. Эпир килнипе пурте савăннă. Каярахпа эпир колхоз хуçалăхĕпе паллашма кайрăмăр. Чи малтан витене кĕтĕмĕр, унтан фермăсене кĕрсе пăхрăмăр. Кунта лайăх лашасем те, ĕнесем те, сурăхсем те, сыснасем те нумай. Тÿррипех калатăп: эпĕ халиччен пурăннă колхозра выльăх кунтин çурри те пулман...

Колхозăн пуймалли мăйсем питĕ нумай. Анчах кунта чи пысăк çитменлĕх — ĕç вăйĕ çитменни. Эпир килнипе колхозра ĕçлеме пултаракан 10 çын хутшăнчĕ. Анчах ку сахал-ха. Çынсем кунта нумай кирлĕ.

Виçĕ уйăх хушшинче эпĕ 200 ĕçкунĕ турăм, çулталăк вĕçне 1000 ĕçкунĕ тума шутлатăп. Куçса килнисенчен М. Е. Жидилин тата И. С. Ерихин аван ĕçлеççĕ. Акă мĕншĕн пирвайхи кунсенчен пуçласах пире колхозниксем килĕштереççĕ».

Çĕнĕ çĕре куçакансене государство пысăк пулăшу парать. Çул çинче тÿлемесĕрех илсе каяççĕ, апат çитереççĕ, вырăна çитсен пысăк льготăсем параççĕ.

Пирĕн республикăри хăшпĕр районсенче çĕнĕ çĕре куçарас ĕçе тытăннă ĕнтĕ.

Анчах та уйрăм районсен руководителĕсем çак ĕçе тивĕçлипе хакламаççĕ, колхозниксене ку ыйту пирки ăнлантарса памаççĕ. Çĕнĕ çĕре куçарас ĕç хăй тĕллĕнех пурнăçа кĕрĕ тесе шутлани тĕрĕс мар. Ку ĕçе партипе совет органĕсен тивĕçлипе ертсе пымалла. Çак ĕçе лайăх организацилесен çеç çĕнĕ çĕре куçарас план пурнăçа кĕме пултарать.

Н. Жуков,
Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи эвакуаци отделĕн начальникĕ.

Граждансене пĕлсе тăма тата тепĕр хут çакăн çинчен пĕлтеретпĕр:

эвакуациленĕ çынсем ăçта пурăнни çинчен Чкалов облаçĕнчи Бугуруслан хулинчи Центральнăй справочнăй бюроран ыйтса пĕлме пулать.

Справкăсем хăвăртрах илес тесен çаксене асăрхамалла:

1. Ыйтусене каялла ответ памалли почта открыткисем çине е халь открыткăсем çине çырса ямалла;

2. Кашни çын çинчен уйрăмăн ыйтса ярас пулать;

3. Ыйтура çаксем çинчен кăна çырмалла (ăнланмалла, лайăх çырмалла): хушамачĕ, ячĕ тата ашшĕ ячĕ (пĕтĕмĕшпех çырас пулать), хăш çулта тата ăçта çуралнă, эвакуацилеччен ăçта пурăннă. Юлашкинчен, ыйтакан хăйĕн хушаматне, ятне тата ашшĕ ятне, хăйĕн адресне çырмалла.

Ыйтура çакăнта кăтартнă сведенисенчен хăшĕ те пулин пулмасан, Центральнăй Справочнăй бюро тĕрĕс справка пама пултараймасть.

Ыйтусене, тĕслĕхрен, çакăн пек çырса ямалла:

«Манăн аппа (анне, атте, тăван) Береговая Ольга Ивановна ăçта пурăнни çинчен пĕлтерĕр. Вăл 1913 çулта Смоленск облаçĕнчи Дзержинск хулинче пурăннă.

Каялла çырмалли адрес: 1985 полевой почта, Игорь Иванович Береговой».

Ыйтусене çак адреспа ямалла: Бугуруслан хули, Чкалов облаçĕ, эвакуацилленисен Центральнăй Справочнăй бюровĕ.

Центральнăй Справочнăй бюро эвакуациленĕ граждансем ăçта пурăнни çинчен çеç пĕлтерет. Урăх ыйтусем тăрăх (военнослужащисем çинчен, предприятисемпе учрежденисен вырăнĕ çинчен т. ыт. çинчен те) вăл пĕлмест. Çавăн пирки те çав ыйтусем тăрăх вăл нимпе справка та памасть.

Эвакуацилленисен Центральнăй Справочнăй бюровĕ.

Рабочисемпе учениксем (хĕрарăмсем пулсан авантарах), машинистсем, машинист помощникĕсем, смазчиксем тата техничкăсем кирлĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Шупашкар, Чувашская урамĕ, 66. кадрсен пайĕ.
2—1

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТРА çакăн пек работниксем кирлĕ: администратор, бухгалтер, сторожсем, дворник, билетерсем, уборщицăсем, художник, паровой отоплени механикĕ, водопроводчик, полотер-вахтер.
4—1

14-мĕш номерлĕ почта ещĕклĕ объекта гл. бухгалтер, счетовод, экономист, кадрсем енĕпе тата мобилизаци енĕпе ĕçлекен инспектор, слесарьсем, электромонтерсем, машинистсем, электросварщиксем кирлĕ.

6—02 номерлĕ телефонпа (икĕ звонок) 8 сехетрен пуçласа 10 сехетчен тата 17 сехетрен пуçласа 19 сехетчен ыйтса пĕлме пулать.

Шупашкар эрех комбинатне ялхуçалăхĕнче ялан ĕçлеме рабочисем кирлĕ. Пĕчченнисене общижити параççĕ, столовăй пур, кашнине хăйшĕн пахча-çимĕç лартса тума çĕр участокĕ параççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0—67, редакци секретарĕн—4—26, промышленность пайĕн—3—99, ялхуçалăх пайĕн—5—31, издательство конторин—0—23.

НТ 152 Типографи № Управлĕния полиграф промышленности при СНК ЧА ССР. Заказ № 2 Ф. б. 58. 42 п.